Çамрăксен çулталăкĕ

# Çамрăк специалистсене кунта кичем мар

Кирек мĕнле отрасльте те, кирек хăш коллективра та çамрăк специалистсемпе ĕçри аксакалсем хушшинче тачă çыхăну пулсан çеç ĕç кал-кал пырать. Тин çеç ĕçе кӳлĕннисене ăслă канашсемпе, вырăнлă сĕнӳсемпе пулăшакансем пулнине нимĕн те ҫитмест. Çамрăк специалистсем вара районти пур организаци-предприятисенче те пурах.

Акă Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райпо коллективĕсенче те çамрăксем сахал мар. Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕн кадрсемпе ĕçлекен çумĕ Г. Бархатова каланă тăрăх, ĕçлекенсенчен 30 процентне яхăн – çамрăксем. Паянхи çамрăк специалистсем ĕçре те, канура та активлă пулнине палăртать вăл.

Ку чăнах та çапла пулнине апрелĕн саккăрмĕшĕнче иртнĕ икĕ райпора ĕçлекен çамрăксен туслăх тĕл пулăвĕ те кăтартса пачĕ. Районти Спорт çуртĕнче çамрăксем хĕрсе кайсах волейбол ла вылярĕç, хаваслă эстафета иртттерчĕç, вĕрен туртса та вăй виçрĕç. Пĕр-пĕрне ташă-юрă парнелесе те савăнтарчĕç. Кăмăллă та интереслĕ иртрĕ икĕ коллектива пĕрлештернĕ «çамрăксен кунĕ».

Каламалла, Муркаш райповĕнче те çамрăксем нумайăн вăй хураççĕ. Ку коллективра та вĕсен хисепĕ 30 процента майлă. Çамрăк специалистсем хушшинче товаровედсем те, бухгалтерсем те, водительсемпе сутуçăсем те чылай. Апла райпо ĕçĕн кашни енĕ малалла аталанса пырать теме май пур. Ăрусем хушшинчи çыхăну тататăлмасть.

2005 çултанпа «Çамрăк кооператорсем» ятлă канаш ĕçлет кунта. Ăна пултаруллă çамрăк специалист Петр Анатольевич Бирюков ертсе пырать. Çак канаш шăпах çамрăксене ĕçлеме хавхалантарассипе тăрăшать, çĕнĕ коллектива хăнăхса вĕсене хăйсен вырăнне тупма та пулăшать. Çамрăк специалистсем тĕрлĕ мероприятисене активлă хутшăнасси те – канашăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Квалификацие ӳстерес тесе çамрăксем ĕçленĕ вăхăтрах аслă шкулсенче те вĕренеççĕ. «Акă нумай пулмасть-ха вĕсенчен иккĕшĕ бухгалтер тата товаровед дипломĕсене алла илчĕç», – паллаштарать çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕпе Петр Анатольевич.

Çамрăксен коллективра хăйсен наставникĕсем те пур. Райпо канашĕн председателĕ Б.В. Андреев районти çăмăл атлетика федерацийĕн ертӳçи пулни те – çамрăк специалистсемшĕн ӳсĕмлĕ ĕçпе сывлăх патне туртăнмалли тĕслĕх. Райпо правленин председателĕ Р.В. Скворцова вара çамрăк товароведсене ĕç вăрттăнлăхĕсене пĕлсе çитме пулăшать. Аслă бухгалтер И.Ю. Яшмолкина вара хăйĕн профильпе ĕçлекен çамрăксене пулăшу парать.

Коллективра çамрăксем хушшинчи çыхăну та çирĕп. Районта тата республикăра иртекен ăмăртусемпе конкурссене тăтăшах хутшăнаççĕ вĕсем. Икĕ çул çеç иртрĕ-ха ЧР вĕрентӳ министрĕ Г. Чернова «Предприятисемпе организацисенче çамрăксен ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн» алă пусса çирĕплетнĕ диплома тивĕçни. Пĕрре тунă ӳсĕмрен вара пăрăнмалла мар.

«Малалла та пирĕн, çамрăксен, активлă тата сывлăхлă пуласчĕ. Хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçласчĕ», – тет паян Муркаш райповĕн «Çамрăк кооператорсем» канаш ертӳçи. Çапла пулсан тен 70-80-мĕш çулсенче Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райпо коллективĕсем хушшинче кашни çул иртнĕ ăмăрту та таврăнĕ.





**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Мăн Сĕнтĕрсем хăнана хаваспах килнĕ; акă вĕсем – «çамрăк кооператорсем».**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Врач канашĕ

# Параличран сывалма пулать

Юлашки çулсенче юн тымарĕсен чирĕсем нумайланса кайрĕç. Вĕсенчен чи йывăррисем – миме инсультчĕ тата чĕре мышцисен инфарктчĕ.

Пуç мимине юн кайнипе е пуç миминчи вĕтĕ юн тымарĕсем атеросклероза е урăх сăлтава пула питĕрĕнсе ларнă хыççăн инсульт пулать. Халăхра çакна паралич теççĕ.

Чĕре патне пыракан юн тымарĕсем вăрахчен хĕсĕннине е питĕрĕннине пула чĕре мышцисен хăш-пĕр тĕлĕнче тĕртĕнĕсем (тканьсем) вилеççĕ. Çакна чĕре мышцисен инфарктчĕ теççĕ. Инфаркт чухне чĕре тĕлĕнче, кăкăр шăмми айĕнче хытă тата вăрахчен ыратать, темиçе сехетрен пуçласа темиçе кунчен тăсăлать. Çак вăхăтрах сулахай хулпуççи, сулахай алă, сайра хутра çурăм тата янах шăмми сураççĕ.

Çак йывăр чирсем чылай чухне юн пусăмĕ хăпарса кайсан пулаççĕ. Çавăнпа та юн пусăмне шайлаштаракан тата чĕре эмелĕсене ĕçсе тăнинчен нумай килет.

Çак чирсенчен вилесси пĕрремĕш вырăнта тăрать. Пирĕн районта пĕлтĕр 141 çыннăн инсульт тата 21 çыннăн инфаркт пулнă.

Инсультпа инфаркт чирĕсенчен сипленме кăçал пирĕн республикăра сосудсен ятарлă тăвать центрне уçнă. Пирĕн района Шупашкарти центр çумне çирĕплетнĕ. Вăл республика больницин территорийĕнче вырнаçнă.

Çак центрсенче кĕске вăхăтра тĕрĕс диагноз лартма тата тĕрлĕ тĕслĕ çĕнĕ меслетсемпе сипленме майсем пур. Чирлĕ çынна малтанхи виçĕ-ултă сехет хушшинче çак центра илсе çитерсен питĕ лайăх. Ăна çак вăхăтра сиплеме пуçласан сыватма çăмăлрах. Çак сехетсене «ылтăн» сехетсем теççĕ.

Çавăнпа та паралич çапнине туйсан е чĕре тĕлĕнче хытă ыратма пуçласан, вăхăтра тухтăрсене чĕнме ан манăр. Килтех иртсе каять пуль-ха тесе хаклă вăхăта сая ан ярăр.

**Н. АРТЕМЬЕВА,**
**районти васкавлă пулăшу уйрăмĕн ертӳçи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Участник долевой собственности Алексеев Валерий Васильевич, 25.06.1955 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д. 25, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Тораевское, на территории землепользования СХПК им. Суворова, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:190501 площадью 1,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Тораевского сельского поселения.**

**2. Алексееву Валерию Васильевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д. 25.**

**Участница долевой собственности Алексеева Роза Евгеньевна, 25.03.1960 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д. 25, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Тораевское, на территории землепользования СХПК им. Суворова, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:190501 площадью 1,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Тораевского сельского поселения.**

**2. Алексеевой Розе Евгеньевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д. 25.**

**В СХПК ПЗ им. Е. Андреева требуются механизаторы на весенне-полевые работы. Оплата сдельная.**
**Тел.: 62-1-97.**

**Тюкланă утă сутатпăр. Хакĕ 50 тенкĕ.**
**Тел.: 8-960-311-55-72, 65-2-33.**

**Услуги сварщика со своим оборудованием, с выездом, также ремонт и настройка всех видов компьютеров, установка спутниковых антенн. Недорого!!!**
**Тел.: 8-917-668-12-87, 8-927-859-82-20.**

**Приглашаем на работу инженера-строителя с опытом проектирования и составления смет, хорошо владеющего компьютерными технологиями.**
**Тел.: 63-6-03, 62-1-80.**
**Лиц. № ГС-4-21-02-1026-0-2112000972-004901-1. 2-2.**

**Продаю сеялку ручную двухстрочную СР-2 для посева моркови, лука чернушки и других культур на приусадебных и в фермерских хозяйствах.**
**Тел./факс: 8(83540)2-14-79, п. Кугеси.**

**ООО «Электротехсервис» выполняет работы по электроснабжению жилых зданий, производственных объектов, строительство линий эл. передач до 10 кВ включительно (кабельных и с использованием СИП). Работы выполняются от проектирования до сдачи объекта в эксплуатацию (производятся электрические измерения, подготовка технического отчета, исполнительно-техническая документация) и представление энергонадзору и пожарной инспекции. Системы охранной сигнализации и видеонаблюдения.**
**Обращаться по тел.: 8-905-343-78-02, 8-903-322-17-76, 8-917-654-41-65.**
**Лицензия: Д745871 от 19.06.2006 г. 2-2.**

**ОАО «Моргаушский кирпичный завод» реализует кирпич керамический по сниженным ценам:**
**М-100 – 6136 руб. за 1000 шт.;**
**М-125 – 7139 руб. за 1000 шт.;**
**М-150 – 7965 руб. за 1000 шт.**
**Предусмотрены скидки до 10 процентов.**
**Тел.: 62-6-38, 62-1-77. 2-4.**


Спорт хыпарĕсем

## Ăмăртусене чĕнетпĕр

Апрелĕн 18-мĕшĕнче сĕтел çи теннисла выляса районта мала тухассишĕн ăмăртусем пулаççĕ. Ăмăртусем Муркаш шкулĕнче 10 сехетре пуçланаççĕ. Командăра 4 çын пулмалла.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче «Сывлăх» комплексра шкул ачисем хушшинче шывра ишессипе ăмăртусем иртеççĕ. Шывра ишессипе ăмăртусем çак кунах аслисем хушшинче те пулаççĕ. Стартсем 10 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

## Муркаш чиновникĕсем – финалта

Иртнĕ шăмат кун патшалăхпа муниципаллă служащисен 8-мĕш Спартакиадин виçинче зонăри ăмăртусем иртрĕç. Унта Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Етĕрне тата Муркаш районĕсен чиновникĕсем хутшăнчĕç.

Шашкăлла выляса финала Етĕрнесемпе Красноармейскисем, шахматпа Муркашсемпе Хĕрлĕ Чутайсем, сĕтел çи тенниспа Муркашсемпе Красноармейскисем, волейболпа Муркашсемпе Элĕксем тухрĕç.




## Куçса çӳрекен кубок – «Передовик» командăра



Апрелĕн 11-мĕшĕнче Тивĕшре ЧАССР тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçчене А.М. Михайлова асăнса виççĕмĕш хут уçă волейбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Мероприятие Раççей Геройĕ Е. Борисов, Муркаш район пуçлăхĕн çумĕсем А. Андреевапа В. Ананьев, Етĕрне район прокурорĕ В. Степанов тата ыттисем те хутшăнса спортсменсене ăнăçусем сунчĕç.

Куçса çӳрекен кубока çĕнсе илессишĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи арçынсен 7 команди вăй виçрĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне Муркаш районĕнчи «Передовик» команда тивĕçрĕ, кубок çĕнсе илчĕ. 2-мĕш вырăна Элĕкри «Правда», 3-мĕш вырăна «Малиновка лесничестви» командăсем тухрĕç. Ăмăртăва хутшăннă пур командăна та парнесем парса чысларĕç.

**Сăн ӳкерчĕкре: çĕнтерӳçĕсене чысланă самант.**


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 14.04.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3850.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.